1.

Чунрине, май пур таран,
кăшт калайăп-и? ...
Ман сĕтел çинче ялан –
Хусанкай лампи.

Парнеленĕччĕ ăна
ывăлĕ тахçан.
Çутă ункă... Мĕн кăна
эп унра курман?

Пушкин сăнлĕ кабинет
çавă çутăра.
Акă, амăшпе пуплет
пĕчĕк кухньăра.

Акă, Йăлăм, пыл шăрши...
Пĕр кĕввех поэт:
«Пырăр-ши» те «пымăр-ши», –
шăппăн йĕркелет.

2.

Антрацит хĕмленнĕнех
йăл çиçет кулли.
Унсăр халь, тен, тĕксĕмрех
ун тăван хули?

Шутламастăп-ха апла!
Упрĕ ĕмĕрне

çĕр-çĕр ял, вуншар хула
унăн сăнарне.

Халăх палăртнă этем
пулнине, пĕрех
пил пек туйнă вăл, теем,
хăй Сиктĕрминчех.

Ылтăнлатрĕ пиллĕ ĕç
пиллĕ сăнара;
пурнăçа шанманни çеç
çукчĕ çав сăнра.

**3.**

Ăс парса каланисем!
Халь те, çак каçра
Çаврăнаççĕ пек вĕсем
шухăшăм тавра.

Нумай енлĕхĕ асрах
пулнăран-и, тен,
савнă çĕр те çывăхрах
ун ячĕпелен.

Кĕмен мар – сăнлăхĕсем
ман йĕркесене, –
ун «тики-тикийĕсем»,
тетĕп вĕсене!

Ĕмĕт те, асран кайми, –
унпалан – чĕрех.
Хур тĕк те, алран кайми, –
ун аллинченех!..

**4.**

Пулчĕ – тĕрлĕ лирăна
пĕрлештерекен.
Кĕнĕ манăн ырана
унпалах – Верлен.

Хăй вара çав Мастера
савнă уйрăмах:
кĕвĕлĕхĕ сăвăра, –
ун та – верленлах!

Ача чух, ун патĕнче
пурăнма пӳрсен,
сăвăсăр мана пичче
ырă каç темен:

«Эй, плацкарт вакун! Пăртак
Çыврасах пуль сан».
– Кам сăвви ку? – Пастернак.
Пĕлĕн-ха кайран.

Виççĕн Миттапа утни
çут унка кĕрет.
Иккĕш шăппăн юрлани

халь те илтĕнет.

**5.**

Туррăм-музыкăм! – Вăя
вăл кисретнĕ май,
моцартла Хусанкая
асăнни – нумай:

шурăмпуç кӳлепи пек
ялтракан орган
унăн «Аптраманĕпе»
туйăнать пек тан,

е – Танийĕ ун утать
Клерхен юррипе,
сĕлĕ шерепи янрать
çил тӳттĕлĕпе...

6.

«Эп вилсен, пĕр эрнене
ĕç юлать», – тесе
калаçатчĕ ман анне
шăппăн эрленсе.

Хусанкай кайсан, часах
сисрĕç ентешсем:
юлчĕç пуль – вун çуллăхах
вăл тăвас ĕçсем!

Тен, Никольский сӑмахне
вӑл асран яман:
«Пӗлтӗм эп хам чыс мӗнне:
эп – кахал пулман».

**7.**

Хӑй лампийӗн ҫутинче
Вичкӗн те вӗри
тинкерет вӑл, ман пичче,
ӗҫӗмӗн тӳри.

Хӑй шӳтлетчӗ: «Свет ҫути»...
Халь ҫав ҫутӑра
сас парать Сӑмах Асти:
«Тӑрӑш... Ан аптра...»

«Ан хӑвар ӳкӗнӗҫе», –
терӗ – кайиччен.
Кам вӗрентеет ӗҫе.
ҫав – Вӗрентекен.

Уншӑн та ӳссех пырать
ӗҫӗм, – тейӗп-и?
...Ман сӗтел ҫинче ҫунать
Хусанкай лампи.

1984